Паян – Сывлăш-десант çарĕсен кунĕ

# Афганистан вăрçин ахрăмĕ

Кăçал пирĕн çарсене сăртлă-туллă инçетри Афганистан Республикинчи хаяр вăрçăран кăларнăранпа 17 çул çитрĕ... Çав йывăр çулсем пирĕнтен инçерех те инçерех юлса пынă май ун çинчен ытларах та ытларах тĕрĕслĕх уçăлса пырать. Инçете юлни вăл пачах манмалла маррине çирĕплетсе Афганистан ахрăмĕ пире совет салтакĕсем тăван килтен аякра юн юхтарнă çулсем пирки аса илтерсех тăрать.

...Июлĕн 21-мĕшĕ. Муркашри çар комиссариачĕ. 11 сехет. Палăртнă вăхăта чĕннĕ хăнасем пурте пуçтарăнса çитрĕç. Мĕн сăлтавпа?

Çар комиссарĕн пӳлĕмне вăтам çулсенчи çӳллĕрех арçын пырса кĕрсен, çак вăхăта кунта пуçтарăннă çар комиссариачĕн ĕçченĕсемпе районти воин-афганецсен Канашĕн членĕсем ăна пĕрин хыççăн тепри ытама илсех саламлама пуçларĕç. Çак арçынсен пĕрле пулса савăнма сăлтавĕ те пурмĕн. Савăнăç сăлтавне пĕлтерсе районти çар комиссарĕ Александр Николаевич Малинин подполковник СССР Аслă Совечĕн Президиумĕн 1988 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнчи Указне вулать. Унта пирĕн район каччине Тури Кăпасра çуралса ӳснĕ Николай Александрович Перова сăрт-ту хушăкĕсенче душмансен чарусăр ушкăнне пĕтернĕ çĕрте хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн "За боевые заслуги" медальпе наградăлама пăхнă. 18 çул шыранă вăл хăйĕн хуçине. Шыранă та тупнă! Çак тĕслĕх çĕршыв хăйĕн паттăрĕсене манманнине тепĕр хут çирĕплетет.

...1986 çулхи майăн 17-мĕшĕ. Пулать вĕт-ха савăн пекки: Коля паян 18 çул тултарать, паянах унăн аллинче хĕсмете каймалли повестка. Арçын ретне тăрса çĕршыва хӳтĕлеме тивнишĕн каччăн чĕри ытти чухнехинчен хĕрӳллĕрех тапать, чунра мăнаçлăх хуçаланать. Салтака ăсатакансем хăй çине шеллесереххĕрхенсерех пăхнине те хирĕçлет савăк чунлă çамрăк: мĕн хăрамалли – мирлĕ вăхăт-çке! Анчах салтак атти тăхăнакан приказ аллине кĕрсе ӳкет çав: çĕршыв ăçта хушнă – çавăнта каймалла, ума лартнă тĕллеве пĕр пăркаланмасăр пурнăçламалла.

Сыв пуллашупа ăсату каçĕ хыççăн Канашри пересылка пунктне пуçтарăннă Н. Перовăн команди Туркменистана лекет. Кунта пирĕн ентешĕ Кишинскри разведбатăн сержант шкулĕнче хĕсметри службăна пуçлать.

– Пире Афганистан валли хатĕрленине вĕрентекенсем пытармастчĕç. Патриотизмла вăй çӳллĕ шайра пулнăран пире çак асăрхаттару хăратмастчĕ, таранрах пĕлӳ илме хистетчĕ кăна. Çавăнпа та салтаксем хушшинче умри йывăрлăхсенчен хăракансем çукчĕ, никам та Афганистанран пăрăнса юлма шутламарĕ,– аса илет 20 çул каяллахине Николай Александрович.

Пилĕк уйăхлăх вĕрентӳ сисĕнмесĕрех иртет. Вăрçă йывăрлăхĕсене хăнăхнă çамрăк салтаксем октябрь вĕçĕнче Афганистанăн тĕп хулине Кабула çитеççĕ. Кунти пересылка пунктĕнчен Николай десантниксен штурм батальонне лекет. Сывлăш-десант çарĕсен чи йывăр участоксене пуринчен малтан çитекен çар ушкăнĕ пулни кашни салтакшăн паллă. Çакна Н. Перов ноябрĕн 11-мĕшĕнче хăйĕн ĕнси çинче пуçласа туйса илет. Приказпа килĕшӳллĕн Пакистан çывăхĕнчи Ачин районĕнчи сăртсем çинче душмансен 2 километр та 400 метр çӳллĕшĕнче вырнаçнă çирĕплетнĕ районне пĕтермелле. Виçĕ ротăпа разведвзвод задание каяççĕ. Йышра тар шăршине тутанман салтаксем те пур. "Эпĕ каймастăп",– текен çеç çук. Акă вăхăт çитрĕ, хĕрӳ çапăçу пуçланчĕ: пульăсем çилпе тавлашса вĕçсе иртеççĕ, снарядсем çĕре кисретсе çурăлаççĕ. Ăçта юлташ, ăçта тăшман пулнине ан çухат кăна. Вăрăма тăсăлнă çак пĕрремĕш çапăçу хыççăн Коля çамрăк пурнăçра пĕрремĕш хут чăнчăн çухатусем тӳссе иртте-рет: хăй призывĕнчи 8 ача, пĕр çул службăра пулнисем 2 ача тата служба вĕçленсе пыракан пĕр чăваш (Комсомольски районĕнчи Алексей Линда) çапăçура пуç хураççĕ. "Хăрас шухăш пулман, юлташа хӳтĕлес тата тăшмана маларах "хуплас" тесе вилĕм пирки те мантăмăр",– тет çав çапăçу пирки воин-интернационалист. Çакăн хыççăн çапăçусем пĕрре мар пулнă, анчах нихăшĕнче те совет салтакĕ приказа пурнăçламанни, каялла чакни пулман.

"Эпир санпа мухтанатпăр",– теççĕ Николай Перова (варринче) медальпе саламласа юлташĕсем.

– Афганистанра çур çул службăра тăнă хыççăн пĕррехинче пĕр çапăçура 150 салтакран тăракан ротăран çурри çапăçу хирне выртса юлни (73 салтак вилнĕччĕ тата иккĕн аманнăччĕ) паян та асран тухмасть. Пурте çамрăк, пурăнмалла та пурăнмалла, анчах... "Хура тюльпансем" Тăван çĕршывалла вĕçнине пăхма-сăнама питех те хурлăхлăччĕ. Ара, тантăшсем вĕт, ĕнер пĕрле чей ĕçнĕ. Чылайăшĕ хĕр тути те курман, – асилӳ çăмхине сӳтнĕ май куççульне хытарса каласать медаль хуçи.

Мотострелоксен 66-мĕш уйăм бригадинчи отделени командирне Николай Перов кĕçĕн сержанта та тăван ялта çара ăсатнă хĕрĕ Оля кĕтнĕ. Кĕтнĕ те кĕтсе илнĕ: паян вĕсен çемйинче ывăлпа хĕр ашшĕ паттăрлăхĕнчен тĕслĕх илсе ӳсеççĕ.

– Çĕршыв воин-интернационалистсем пирки манманни пире пурнăçра хавхалантарать кăна. Пирĕн юлташăмăра Николай Александрович Перова 18 çултан çапăçура тивĕçнĕ медаль шыраса тупнишĕн эпир паян пурте пĕрле савăнатпăр,– терĕ хăйĕн саламлă сăмахĕнче районти воин-афганецсен Канашĕн председателĕ Вячеслав Евсеевич Киршев.

Çакнашкал тĕслĕхсем паян çара каякансемшĕн пысăк пĕлтерĕшлине Хорнуй ялĕнче çуралса ӳснĕ, паян Раççей çарĕнче Сахалинри уйăм авиаци полкĕнче уйăм авиагруппа командирĕ пулса службăра тăракан Владимир Сорокин уйăммăн палăртрĕ. Килĕшмелле.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

ГИБДД асăрхаттарать

## Инкекрен асăрханмалла

Пурне те паллă ĕнтĕ, çул-йĕр çинчи инкексем ытларах чухне тимсĕрлĕхпе, çул-йĕр правилисене пăхăнманнипе тата руль умне ӳсĕрле ларнипе çыхăннă. Июль уйăхĕнче кун пек инкексем 6 пулчĕç, вĕсенче 2 çын вилчĕ тата 5 çын аманчĕ.

Акă, июлĕн 1-мĕшĕнче каçхине 12 сехет тĕлĕнче Муркаш çулĕ çинче Лукин тытса пыракан ВАЗ-2108 автомашинăпа Атласкин мотоциклĕ çапăннă. Ку инкекре Атласкинăн тата хыçалта ларса пыракан Григорьевăн пурнăçĕ татăлнă.

Июлĕн 8-мĕшĕнче каçхине 2 сехет тĕлĕнче Карамалкасси çулĕ çинче Шупашкарта пурăнаканскер Ява-350 мотоциклпа çуран утакан 1983 çулта çуралнă Мидюкована çапса хăварнă. Çак инкеке пула иккĕшĕ те тата хыçалта ларса пынă Гаврилова та больницăна лекеççĕ.

Çавăнпа та тепĕр хут пурне те – водительсене, çуран çӳрекенсене – асăрхаттарса хăварас килет: çул çинче яланах тимлĕ, асăрхануллă пулăр, инкекрен сыхланăр. Çывхарса килекен автомашина умĕпе çул урлă нихăçан та чупса ан каçăр. Ыттисене те, хăвăрăн ачасене те çул-йĕр çинче тимлĕ пулмалли пирки асăрхаттарсах тăрăр.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА!**
**4 и 18 августа 2006 года на центральной площади с. Моргауши Моргаушское райпо проводит ШКОЛЬНУЮ ЯРМАРКУ. Начало в 9 часов. Мы ждем ВАС.**

**Продаю чугунные радиаторы отопления б/у, недорого. Тел. дом.: 30-2-31, 8-927-857-95-71.**

**11 августа в районном Доме культуры состоится выставка-продажа пальто производства фирмы «Шик» г. Новочебоксарска. Кредит.**

**11 августа в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**8 августа в РДК**
**с 10 до 18 часов**
**ВЫСТАВКА–ПРОДАЖА ПАЛЬТО**
**«Торжокской швейной фабрики»**
**В ассортименте: плащи, зимние и демисезонные пальто, полупальто.**
**Размеры от 42 до 62.**
**Спешите! Сезонные скидки!**

**Продаются речной песок и гравмасса. Доставка.**
**Телефоны: 2-13-05, 8-960-300-62-92, 8-906-386-77-37.**

**Требуются разнорабочие (плотники, каменщики) в Нижний Новгород.**
**Телефоны: 8-906-133-67-72, 8-927-848-52-24.**

**Срочно продается двухкомнатная квартира (38,2 кв. м. общая площадь) в с. Б. Сундырь.**
**Звонить по телефону: 8-927-861-17-77.**

**В связи с ремонтом котельной баня не будет работать с 1 августа 2006 года.**
**Администрация МУП ЖКХ «Моргаушское».**

**Октябрь уйăх пуçламăшĕнче 4-мĕш хут пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр.**
**Килти телефон: 60-1-36, 10 сехет хыççăн шăнкăравламалла, ĕçри телефон 60-0-91.**

**КПКГ «Агрокредит»**
**Приглашаем пайщиков**
**Хранение сбережений**
**3 мес. - 14 %12 мес. - 20 %**
**6 мес. - 17 %24 мес. - 25%**
**12 мес. («Пенсионный») - 21%**
**Потребительские займы до 20 000 руб., 5% в месяц**
Свид. о гос. рег. 6612441197 от 28.08.2001г.
**с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23 (здание сельхозтехники)**
**Тел. 2-18-13**
**10-10.**

**Доставка кирпича (силикат, красный керамблок) до дома. Цена доставки договорная.**
**Тел.: 8-906-134-16-47, 60-7-06. 3-3.**


Панклири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул учитель пулса ĕçленĕ
**Нина Степановна СТЕПАНОВА**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурлании çинчен пĕлтерет.

«Муркаш издательство çурчĕ» патшалăх унитарлă предприяти коллективĕ кунта техслужащи пулса ĕçлекен Р.В. Рыжкован хуньашшĕ
**Анатолий Егорович РЫЖКОВ**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх çыннисемпе хурланса пĕлтерет.

Моргаушский районный узел электросвязи Кугесьского МУЭС глубоко скорбит по поводу смерти отца инженера Рыжкова В.А.
**РЫЖКОВА Анатолия Егоровича.**

### ГАЗОПРОВОД ЯВЛЯЕТСЯ ИСТОЧНИКОМ ПОВЫШЕННОЙ ОПАСНОСТИ

К сведению руководителей промышленных предприятий, строительно-монтажных организаций, колхозов, совхозов, фермерских и арендных хозяйств, других землепользователей и частных лиц.

**Филиал ООО «Волготрансгаз» - «Чебоксарское ЛПУМГ»** уведомляет: по землям **Моргаушского района** проходят магистральные газопроводы и газопроводы-отводы высокого давления (до 41 атм.), обеспечивающие потребности промышленных предприятий и населения в природном газе, являющиеся объектами повышенной опасности!

**Строительными нормами и правилами (СНиП 2.05.06-85) установлены ЗОНЫ МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ от осей газопроводов и границ газораспределительных станций (ГРС) )далее - ЗМДР)** до населенных пунктов, отдельных промышленных и сельскохозяйственных предприятий, зданий и сооружений, отдельно стоящих нежилых и подсобных строений, гаражей и открытых стоянок для автотранспорта, коллективных садов, автомобильных и железных дорог. Зоны минимальных расстояний составляют от 100 до 350 метров в зависимости от диаметра газопровода, степени ответственности объектов и служат для обеспечения безопасности этих объектов.

**ЗАСТРОЙКА ЗОН МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ ДО ГАЗОПРОВОДОВ И ГРС НЕ ДОПУСКАЕТСЯ. ПОСТРОЕННЫЕ В НИХ СООРУЖЕНИЯ ПОДЛЕЖАТ СНОСУ БЕЗ ВЫПЛАТЫ КОМПЕНСАЦИИ.**

**ПРИВАТИЗАЦИЯ ЗЕМЕЛЬ В ЗОНЕ МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ ГАЗОПРОВОДА НЕ ДОПУСКАЕТСЯ БЕЗ СОГЛАСОВАНИЯ С ВЛАДЕЛЬЦЕМ ГАЗОПРОВОДОВ - Филиалом ООО «Волготрансгаз» - «Чебоксарское ЛПУМГ»!**

Кроме того, **Правилами охраны магистральных трубопроводов**, утвержденными Постановлением Правительства и Госгортехнадзора РФ (№ 9 от 22 апреля 1992 года), в целях исключения возможных повреждений газопроводов, установлены **ОХРАННЫЕ ЗОНЫ** газопроводов в виде участков земли, примыкающих к газопроводу на всем протяжении на расстоянии 25 метров от оси газопровода с каждой стороны и в 100 метрах от каждой стороны ограждения ГРС. Любые работы в охранных зонах **без ПИСЬМЕННОГО РАЗРЕШЕНИЯ** Филиала ООО «Волготрансгаз» - «Чебоксарское ЛПУМГ», эксплуатирующего газопроводы, ЗАПРЕЩЕНЫ.

В охранных зонах категорически запрещены: разведение огня, размещение источников огня, свалка мусора и т. д.

Механическое повреждение газопровода высокого давления приведет к взрыву большой разрушительной силы, человеческим жертвам, материальным потерям и прекращению газоснабжения потребителей.

Не устраняются нарушения требований к ЗМДР на территории деревни М. Татаркасы, СХПК «Передовик», садоводческих товариществ «Пищевик», «Энергетик» и «Университетское».

**Виновные в нарушении Правил охраны магистральных трубопроводов и СНиП, подвергаются преследованию согласно действующему законодательству.**

Всем предприятиям до начала работ в охранных зонах коммуникаций, обслуживаемых Чебоксарским ЛПУМГ, следует пройти **регистрацию** в Управлении по технологическому и экологическому надзору по Нижегородской области Ростехнадзора по адресу: 603022, г. Нижний Новгород, Окский съезд 4, тел.: 30-98-82, факс: 30-98-82.

**Сведения о местонахождении газопроводов заинтересованные юридические и физические лица могут получить в администрации района и в Филиале ООО «Волготрансгаз» - «Чебоксарское ЛПУМГ».**

При обнаружении утечек газа, по вопросам производства строительно-монтажных и других работ в зоне прохождения газопроводов, а также для предупреждения нежелательных последствий при оформлении сделок с землями, по которым проложены газопроводы, обращайтесь в Филиал ООО «Волготрансгаз» - «Чебоксарское ЛПУМГ» по следующему адресу:

**г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Чебоксарское ЛПУМГ, тел.: 21-09-20, 20-07-18.**


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇЁНТЕРӲ ЯЛАВЁ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Зам. гл. редактора**
**В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3391.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 01.08.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.